Çĕнĕ чăваш çырулăхне тăвакансем

Андрей АЛЕКСЕЕВ, Николай КРАСНОВ

ЧĂВАШ ÇЫРУЛĂХĔН ИСТОРИНЕ пирĕн ученăйсем ку тарана çитсе сахал мар тĕпченĕ. Çапах ăна тăвакансем çинчен (И. Я. Яковлевсăр пуçне) журналсенче ятарласа тĕплĕн çырса кăтартниех пулманччĕ пулас-ха. Тăван çырулăха пуçарса яракансене эпир ĕмĕр-ĕмĕр тав туса пурăнма тивĕç. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ пусмăр саманинчех халăхăмăрăн чунхавалне çĕклентерме, ăна хайĕн тивĕçне ăнланса илме, тăван халăх культурине вăйлă аталанмă çырулăхлă халăхсен культури шайне çити çĕклеме, чăвашсен наци ăнланулăхне вăратма пулăшнă.

Пирĕн çырулăх хăйĕн çулĕсемпе çамрăках мар: чăваш сăмахĕсене хут çине çырса пичетленĕренпе 240 çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Хăшпĕр тĕпчевçĕсем: чăвашсен пиллĕкмĕш ĕмĕртех çырулăх пулнă, теççĕ. Анчах вăл, паллах, хальхи пек саспаллиллĕ çырулăх пулман ĕнтĕ. Авалхи чăвашсен руна паллисенчен тăракан çырулăхĕ пулнă вăл. Ахальтен мар пуль чăваш тĕррисенчи ӳкерчĕксем çав авалхи çырулăх паллисене аса илтереççĕ.

Историксем чăваш сăмахĕсене чи малтан швед çарĕн капитанĕ Ф. Страленберг çырса илнĕ, теççĕ. Хăй вăл, 1709 çулта Полтава патĕнчи пĕр çапăçура Пĕрремĕш Петĕр çараталанма май паракан хăшпĕр реформăсем туса ирттернĕ: 1861 çулхи февральте крепостной правăна пăрахăçланă, ун хыççăнах земствăна, суда, цензурăна, çутĕçне çĕнĕлле йĕркелеме май паракан реформăсене çирĕплетнĕ. 1864 çулта кĕпĕрнесемпе уессенчи земство учрежденийĕсем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ. Çак положени кĕпĕрнесемпе уессенчи земствăсене хуçалăхпа халăха вĕрентес ĕçе выранти условисене кура йĕркелеме тата ертсе пыма ирĕк панă. 1864 çултах патша правительстви пуçламăш халăх училищисем çинчен калакан положение çирĕплетнĕ. Çак положени хăшпĕр учреждениесемпе уйрăм çынсене шкулсем уçма та ирĕк панă.

1866 çулта çутĕç министрĕпе Д. А. Толстой графпа Хусанти тĕне кĕнĕ тутар ачисен шкулĕнче ĕçленĕ Н. И. Ильминский Хусан вĕренӳ округĕнче халăха вĕрентес ĕçе тĕрĕсленĕ, çавна май Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар тĕрлĕ халăхсен шкулĕсемпе паллашнă. Патша Раççейĕн Çутĕç министерстви сĕннипе тĕрĕслев итогĕсене, педагогикăпа методика ыйтăвĕсене Хусанта, Петербургра пухнă канашлусенче çине-çинех сӳтсе явнă. Канашлусенче хĕрӳ тавлашусем пулса иртнĕ. Уйрăмах шкулсенче тăван чĕлхе вĕрентме юрани-юраманни пирки хĕрӳ калаçусем пуçланнă.



А. В. РЕКЕЕВ

не тыткăна лекнĕскер, 18 çул хушши Çĕпĕрте пурăннă, унти халăхсен культурипе йăли-йĕркине сăнанă, чĕлхине тĕпченĕ. Каялла тăван çĕршывне таврăннă чух (1727) Страленберг Хусанта чарăнса тăнă, чăвашла чухлакан кунти тăлмачсенчен 28 сăмах çырса илнĕ. Вырăс çарĕнче службăра тăнă Михай Турколи венгр та чăвашсен пурнăçĕпе, йăли-йĕркипе интересленнĕ. Вăл хăйĕн 1724 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче Астраханьтен Венгрие янă пысăк çырăвĕнче Вăтам Атăл тăрăхĕнчи чăваш ялĕсенче пулни çинчен тата вĕсен йăли-йĕркине çырса кăтартнă. 1769 çулта Наукăсен Петербургри академийĕ тăрăшнипе чăваш чĕлхин малтанхи грамматикине «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» пичетлесе кăларнă.

Чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарни те вĕсен культурипе çырулăхне аталанма пулăшнă, чăвашла кĕнекесем кăларас ĕçе хăвăртлатнă. Кивĕ çырулăх тапхăрĕнче (1730—1870) тĕн содержанилле çирĕме яхăн чăвашла кĕнеке пичетлесе кăларнă. Анчах вĕсем пурте тĕнĕ пекех ниме юрăхсăр куçарусем çеç пулнă-ха.

XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине патша правительстви Раççейăри капитализма хăвăртрах

И. Я. ЯКОВЛЕВ



Атăл тăрăхĕнчи халăхсене вĕрентес тĕлĕшпе 1867 çулта йĕркеленĕ Гурий святой ячĕпе хисепленекен Тăванлăх обществи те пархатарлă ĕç тунă. Вăл пулăшнипе Хусан кĕпĕрнинчи чăваш, мари, удмурт, тутар, вырăс ялĕсенче нумай шкул уçнă.

Вырăс мар халăхсене вĕрентес ыйтупа тĕрлĕ тавлашусем пулса иртнĕ, терĕмĕр. Тăватă çула яхăн пынă дискусси материалĕсене 1869 çулта Петербургра «Сборник документов и статей по вопросу об образовании инородцев» ятпа пичетлесе кăларнă. Материалсене тĕплĕн тишкернĕ хыççăн комисси, пĕр саслă пулса, Н. И. Ильминский тĕне кĕнĕ тутарсен шкулĕнче тĕрĕслесе пăхнă педагогикăпа методика системине ырласа йышăнать, Атăл тăрăхĕнчи халăхсен шкулĕсенче тăван чĕлхе вĕрентме ирĕк памалли çинчен калакан положени проектне çырса хатĕрлет. Çав проекта 1870 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче правительство çирĕплетнĕ.

Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсене çутта кăларас тĕлĕшпе уйрăмах Н. И. Ильминский (1882—1891) нумай тăрăшса ĕçленĕ. Вăл 1863 çулта Хусанта тĕне кĕнĕ тутар ачисем валли шкул уçнă, унта хăйĕн педагогикăпа методика принципĕсене тĕрĕслесе çирĕплетнĕ. Часах вырăс мар халăхсен чĕлхипе юрăхлă çырулăх тăвас юхăм пуçланнă.

Çамрăк И. Я. Яковлев 1864 çултах, Атăл тăрăхĕнчи кĕпĕрнесенче çĕр вишсе сӳренĕ вăхăтра, чăвашсем валли çырулăх тăвасси çинчен ĕмĕтленнĕ. Унăн асаилĕвĕсенче çапла çырса хăварнă йĕркесем пур: «1864 çулта эпĕ Сызрань уесĕнчи Винновка ялĕнче ĕçлеттĕм. Мана пĕр шухăш канăç памастчĕ: тăван халăхăн çырулăх çукки пăшăрхантаратчĕ, мĕншĕн ытти халăхсен — вырăссен, тутарсен хăйсен çырулăхĕ пур, мĕншĕн чăвашсен çук», теттĕм.

1868 çулта И. Я. Яковлев Чĕмпĕр хулинче (халĕ Ульяновск) чăваш шкулĕ уçнă. Çак ĕçре ăна 1869 çулта Чулхуларан Чĕмпĕре куçса килнĕ Илья Николаевич инспекторпа паллашни, унăн ырă канашĕсем нумай пулăшнă.

1870—1875 çулсенче И. Я. Яковлев Хусан университетĕнче вĕреннĕ. Кунта та вăл çырулăх тăвас ĕмĕте пăрахман. 1870 çулхи пĕр кĕрхи кун вăл Хусан университетĕнче арабпа тутар чĕлхисем вĕрентекен Н. И. Ильминский профессорпа паллашать, çĕнĕ çырулăх тăвасси çинчен сăмах пуçарать. Н. И. Ильминский, И. Я. Яковлев студентăн шухăшне ырласа, ăна çак ĕçре пулăшма килĕшет. Чăваш çырулăхĕн малтанхи тапхăрĕнчи ĕçсене тĕплĕ тишкерсе тухсан, Н. И. Ильминскипе И. Я. Яковлев малтанхи тăлмачсем, çавăн пекех Хусан [illegible] округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕ Н. И. Золотницкий те чăваш чĕлхин тĕп законĕсене çителĕклĕ таран пĕлменни тата вĕсен пĕтĕм чăваш халăхне тивĕçтерекен пĕр литература чĕлхи тумалли идейисемпе принципĕсем йăнăш пулнине курнă. Н. И. Ильминский, И. Я. Яковлева чи малтанах чăвашсен калаçу чĕлхинчи сасăсене тĕрĕс палăртакан алфавит тумалли çинчен каланă. Вăл çак ĕçе И. Я. Яковлевсăр пуçне университетăн историпе филологи факультечĕн арабпа тутар чĕлхисен уйрăмĕн иккĕмĕш курсĕнче вĕренекен В. А. Белилин студентпа Хусанти тĕне кĕнĕ тутар ачисен шкулĕнче вĕренекен чăваш ачине С. Н. Тимрясова хутшăнтарнă. Çапла вара, Н. И. Ильминский кăтартăвĕсене тĕпе хурса, И. Я. Яковлевпа ăна пулăшакансем чăвашсен хальхи çырулăхне пуçарса янă. Чăваш алфавитне тума çăмăлах пулман. Чи малтанах чăваш чĕлхинчи сасăсен хисепне, сăн-сăпатне, вĕсем пуплевре хăçан епле илтĕннине уçăмлăн палăртмалла пулнă. Вырăс пулнă май В. А. Белилин чăваш чĕлхинчи сасăсене çăмăллăнах уйăрса илме пултарнă. И. Я. Яковлев аса илнĕ тăрăх, В. А. Белилин чĕлхе ăслăлăхне аван чухлакан, пултаруллă та ĕçчен студент пулнă.

1871—1873 çулсенчи çуллахи каникул вăхăтĕнче И. Я. Яковлев хăйĕн юлташĕсене Пăва уесĕнчи Кăнна Кушкипе ытти ялсенчи чăвашсен калаçу чĕлхине сăнаса вĕренме виçĕ хутчен экспедицие илсе кайнă. Çынсене пухса вĕсен калаçăвне тимленĕ, малтанхи букварьсем валли халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене çыра-çыра илнĕ, вĕсен конструкцине, унта шухăш мĕнле йĕркеленнине, сăмахсен пуплеври вырăнне, сасăсен тытăмне сăнанă, тĕпченĕ. Чăваш чĕлхинчи сасăсен хисепне пахалăхне тĕрĕс палăртас тесе, малтанхи вăхăтра уйрăмах В. А. Белилин тăрăшса ĕçленĕ. Сăнавсем тăва-тăва, И. Я. Яковлевпа ăна çырулăх тăвас ĕçре пулăшакансем В. А. Белилин, С. Н. Тимрясов, А. В. Рекеев, И. И. Иванов, Т. П. Петров чăваш чĕлхинче хытă тата çемçе хупă сасăсем кĕскеуçă сасăсем ă, ĕ пуррине асăрханă. Çапла тăрăшса ĕçленĕ май вĕсем чăваш чĕлхинче 8 уçă сасă—а, ъ (хальхи ă вырăнне), е, ь (хальхи ĕ вырăнне), ы, и, у, ӳ тата 37 хытă тата çемçе хупă сасă—пĕтĕмпе 45 сасă палăртнă. Çакăнпа И. Я. Яковлевпа ун вĕренекенĕсен чăваш чĕлхин çĕнĕ алфавитне тăвас ĕçри тĕпчевĕн малтанхи тапхăрĕ вĕçленнĕ. Вĕсем кашни сасăн хытă тата çемçе варианчĕ сăмах пĕлтерĕшне уйăрса илме пулăшакан уйрăм фонема тесе шутланă. Ку